* * *

Хама поэт теме хăратăп эпĕ.
Ытла, ытла та маншăн чаплă ят.
Ăна тӳрмен йăтса пыма тӳсеп-и,
Хăш чух кайса ӳкес пек туйăнать.

Пуçа тытасчĕ халĕ манăн каçăр,
Куçа тĕллесчĕ çӳллĕ пĕлĕте.
Анчах йĕтем çинче капан лартмасăр
Мана каппай пулма хушман атте.

Кĕнекесен капанĕ — ман поэзи —
Хăпарнă та хăпарĕ малалла.
Мĕскер шутлатăн, критик тусăм, эсĕ?
Унта кĕрсе, тархасшăн, ан кăшла!

Кĕлтисене çапса çилпе силлерĕм,
Пуçтартăм унăн ылтăн тыррине,
Пĕр ушкăн шăпчăка типтеррĕн
Çитертĕм те вĕçтертĕм çуркунне.

Вĕсем пурте çунат çапса юрлаççĕ
Паян чăваш поэзи садĕнче.
Юрланă чух вĕсен сасси пăртакçă
Тăрать-и уйрăлса ыттисенчен?

Кашни поэтăн пултăр уйрăм енĕ,
Начар пулсан та сас хăйне кура.
Вара чăнах та ячĕ ун çĕкленĕ,
Йĕрри-сукмакĕ юлĕ халăхра.

Пулсан хама кура янравлă сассăм,
Çырма хаваслăх илĕртет мана.
Вара пуçа пăртакçă каçăртассăм
Килет çынсем курман чухне кăна.

*1957*